# ХАЛӐХИ САМАНА.

Изданіе газеты „ХЫПАР“.

КАЗАНЬ.
Центральная Типографія.
1906

## Иккĕмĕш Государственная Думана çынсем суйласа йарасси çинчен.

Іюль уйăхин 8-мĕш кунĕнче правительство Государственная Думана салатса йачĕ. Думана салатнă майпа правительство манифест кăларчĕ. Çав манифестра правительство Думана мĕншĕн салатни çинчен çырат. Унта, правительство Думана кирлĕ мар ĕçсем тунăшăн, патша лартнă çынсен ĕçĕсене тиркенĕшĕн, халăха усăлă ĕçсем тăвайманшăн салатнă, тенĕ. Чăнах та, малтанхи Государственная Дума 72 кун хушшинче те халăхшăн нимĕнех те тăвайманре, министрсемпе анчах тавлашса ирттерчĕ. Анчах правительство ăна нимĕн те тăвайманшăн мар, хăйне хирĕç тăнăшăн, халăхшăн çĕрпе ирĕк ыйтнăшăн салатса йачĕ. Хăйне йурăхсăр Думана салатса, хăй майлă тăракан Дума суйласшăн пулчĕ. Çавăнпа, правительство, Думана салатса йарсанах, çĕнĕ Думана пуçтарас вăхăта хатĕрлене пуçларĕ. Халĕ бюроратія хăйне хирĕç çыракан хаçетсене хуптарат; вĕсен редакторсене тыта-тыта тĕрмене хупаççĕ. Чиновниксен шанчăклă мар пек туйăннă çынсене хăшне, патшалăха хирĕç пыраççĕ тесе, сута параççĕ, хăшне тĕрмене хупаççĕ, хăшне çуралнă çĕр шывĕсенчен йут çĕре кăларса йараççĕ. Хаçетсене хуптарса, бюрократія хресченсем, ĕçри çынсем тĕнче ĕçĕсене, вĕсем йепле пулнине. патшалăх ĕçĕсене йепле тумаллине ан пĕлчĕр тет. Хăйĕн кăмăлне кайман çынсене сута парса, тĕрмене лартса, вĕсене Думана йарасшăн мар.

Сенат Думана суйласси çинчен указсем кăларат. Çав указсем тăрăх хресченсем, хулари ĕçре çӳрекенсем нумайĕшĕ Думана суйласа йама пултараймаççĕ. Аникин, Аладьин пек çынсем Думана кайаймаççĕ. Çапла туса, правительство Думана мĕнле те пулсан хăйне йурăхлă çынсене, хăй май тăракан çынсене суйлаттарасшăн.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . Йут пашшалăх çыннисем пирĕн бюрократiяна халĕ укçа кивçен памаççĕ. Дума пуçтарăр, Дума илме хушсан укçа парăпăр, теççĕ. Çавăнпа, укçа илме май пултăр тесе, бюрократiя Думана хăйне йурăхлă çынсем пуçтарасшăн. Çавăнпа, бюрократiя хăй майлă тăрас çынсене темиçе тĕслĕ пулăшаĭ. Хаçетсем кăларма вĕсене темĕн ҫухлĕ укçа параĭ, вĕсене пуçтарăнса канашлама ирĕк параĭ, вĕсен çинҫен тĕрлĕ ырă хыпарсем кăлараĭ. Мĕн тесен те, правительство Думана хăйне пулăшас çынсене пуçтарасшăн. Думара ун пек çынсем пулсан, правительство вĕсене хăй йенне çавăрĕ те, бюрократiя халăх майлă çĕнĕ законсем ҫасах кăларттармĕ. . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Çĕнĕ Думана правительство çапла тăвасшăн. Ҫăнах та, Дума правительствона анҫах йурăхлă пулсан, халăха нимĕн ырлăх та, нимĕн усă та кăтартас çук. Ĕлĕкхи Дума халăхшăн нимĕнех те тăваймарĕ. Анҫах вăл çапах халăхшăн ырă тăвас тесе тăрăшрĕ· ырă тума кансĕрленипе анҫах нимĕн те тăваймарĕ. Çĕнĕ Дума бюрократiя майлă пулсан, халăха ырă тума мар, ырă тăвас тесе те шухăшласа пăхмĕ.

Дума çапла ан пултăр тесен, халăхăн та Думана çынсем суйласа йарас вăхăта пит хатĕрленес пулаĭ. Правительство хăй майлă Дума пуçтарас тесе тăрăшаĭ, халăхăн та хăйне йурăхлă Дума тăвас тесе тăрăшас пулаĭ; кай, ку та ĕлĕкхи пекех, пирĕншĕн нимĕн те тăваймĕ тесе выртас пулмасĭ. Ырă тăвайми пулсан çĕнĕ Думан усал тума парас пулмасĭ. Бюрократiя Думана хăй майлă тăрас çынсене йама тăрăшаĭ. Халăхăн та хăй майлă тăрас çынсене йарас пулаĭ. Думана суйлас вăхăт çитҫенех, кама суйлассинеканаш туса хурас пулаĭ. Думана кайас тийекен çынсем мĕнле çынсем иккенне аван пĕлес пулаĭ: вĕсем мĕнле партiяра тăнине, Думана кайсан камшăн тăрăшассине, мĕн тăвассине аван тĕпҫесе пĕлес пулаĭ. Халăхшăн тăрăшассине пĕлсен, çавна суйлама тăрăшас пулаĭ. Ытти çынсене те çав çынна суйлама вĕрентес пулаĭ, вăл кам иккенне, вăл мĕн шухăш тытнине пурне те ăнлантарса парас пулаĭ. Пурне те çапла ăнластарас тесен, пĕр-пĕринпе ҫасрах курса калаçас пулаĭ, канашлас пулаĭ, ытти çынсене ху йенне çавăрма тăрăшас пулаĭ.

Тĕнҫери ĕçсене пăртак ăнланакан çыннăн ăнланса çитерейменнисене Думана суйласси пит аслă ĕç, пит кирлĕ ĕç иккенне ҫас-

ҫасах каласа парас пулаҫ. Думана суйлама пултаракансем пур те суйлама тӑрӑшас пулаҫ. Акӑ мӗне пит аван астуса тӑмалла: Думана кам нумай сасӑ илет, ҫав кайаҫ. Ҫавӑнпа ху суйласа йарас тийекен ҫынпӑн нумайтарах сасӑ пултӑр тесе тӑрӑшмалла. Никамӑн та сасӑ памасӑр йулас пулмасҫ. Хӑш ҫухне пӗр ҫын сасси те темӗнә тӑраҫ. Пӗр сасӑ ҫитеймен пирки Думана ҫакланмасӑр йулма пулаҫ. Вара халӑхшӑн тӑрӑшакан ҫын вырӑнне черносотенец кайма пултараҫ. Думара халӑхшӑн питех тӑрӑшман ҫынсем нумайтарах пулсан, халӑха пысӑк хуйхӑ пулӗ. Думана суйлас вӑхӑт ҫиттет. Пурин те ҫав вӑхӑта хатӗрленес пулаҫ. Думана кайас тийекен ҫынсене авантарах тӗпҫесе пӗлес пулаҫ.

С. Н.

---

## Хаҫетсем ҫинҫен.

Пирӗн халӑх тӗттӗм. Шурӑпа хурана аванах паллаймасҫ. Патшалӑх ӗҫӗсене пӗрттех пӗлмест. Вӗрентмесен, ӳлӗмрен те пӗлес ҫук. Акӑ халӗ тата иккӗмӗш Думана суйлас вӑхӑт ҫитрӗ. Суйлас тӗлӗшӗнҫен те пирӗн халӑх усалпа ырра пит аванах пӗлмест. Ҫавӑнпа хаҫет вулани халӗ пит кирлӗ-ҫӗ. Хаҫетсем кӑшт ирӗккӗн туха пуҫланӑранпа, халӑх ҫӑн шурӑпа хурана паллакан пула пуҫланӑҫӗ.

Анҫах епир пӗр май шухӑшлатпӑр, ыттисем тепӗр май шухӑшлаҫҫӗ курӑнаҫ. Ҫак ернесенҫе Хусанта тӑватӑ хаҫет хупса лартрӗҫ. Вӗсенҫен пӗри-ҫӑвашла хаҫет—Хыпар. Пирӗн мӗн пурӗ те пӗр хаҫет анҫах-ҫӗ. Ӑна та пулин пӗр вӑхӑта хупӑнмалла турӗҫ. Хаҫет кӑларакан ҫынна тӗрмене хупса лартрӗҫ. Ун йаҫӗсӗр хаҫет тухаймаст. Мускавра халӗрех ҫиҫӗ хаҫета сута паҫӗҫ. Питӗрте икӗ хаҫет хупса лартрӗҫ. Полтавара икӗ хаҫете пӗр вӑхӑта йӑлтах пӑрахӑҫ турӗҫ. Ҫӗмпӗрти хаҫета сута паҫӗҫ. Ытти ҫӗрте хаҫетсене те хытӑ хӗсеҫҫӗ: темӗн ҫухлӗ хаҫет пӑрахӑҫ тутарнӑ, темӗн ҫухлӗшне сута панӑ. Ҫи аван хаҫетсене, халӑх майлӑ каласаканнисене хупрӗҫ. Улпутсем майлӑ тӑракан хаҫетсем кӑна ирӗккӗн каласаҫҫӗ.

Таҫта пӗр ҫӗрте каланӑ: Кӗтӳҫине пӗтерӗп те, кӗтӗвӗ саланса кайӗ, тенӗ. Халӗ те ҫавӑн пек тухаҫ. Халӑха вӗрентекенсене

вĕрентме ҫараҫҫĕ, халăха хаҫетсăр хăвараҫҫĕ. Ҫас Дума пуҫтарăнмалла. Халăха йĕркелĕ вĕрентекен пулмасан, вăл тен ҫăнах йепле ҫынсене суйлассине пĕлмĕ. Хаҫет хупакансем ҫавна кĕтеҫҫĕ пулас; пĕлмесĕр суйласан Дума пирĕн майлă пулĕ, теҫҫĕ пулас.

Хаҫетсенс мĕншĕн хупаҫҫĕ? Хаҫетсем тĕрĕс мар калаҫҫĕ пулсан, тĕрĕс мар тесе кала. Мĕн тĕрĕссине, мĕн тĕрĕс маррине халăх хăй те ăнланаҫ. Вăл ухмах мар

Апла пулсан, хаҫетсене тен закона хирĕҫ пынăшăн пăрахăҫ тумаҫҫĕ-ши? Ҫук, уншăн та мар. Закон тăрăх хаҫетсене Патшапа хирĕҫ каланăшăн, тата халăха пăлхав (бунт) кăларма хĕтĕртнĕшĕн анҫах хупма панă. Халĕ пирĕн закона хирĕҫ пырса та хупаҫҫĕ. Полтава хулинҫе «Полтавщина» йатлă пĕр хаҫет пурҫĕ. Вăл хаҫета хупас шухăшпа, губернатор, нимĕн айăпсăрах, «Полтавщина» ҫанакан типографіяна хупса ларгнă. Тепĕр хаҫета «Чернозема» пĕр ҫинлă ҫын ĕҫне хурланăшăн хупнă. Виҫҫĕмĕш хаҫета ҫав хуларах нимĕн сутсăрах кăлармала мар тунă. Пыр та, калаҫ!

Мĕн шухăшпа хупаҫҫĕ-ши?—Темĕн, хăвăр шухăшласа пăхăр; мĕншĕн те пулин хупаҫҫĕ пуле.

*В. Иванов.*

## Выçлăх вырĕнсенҫи халăха продовтльствіе парасси çинҫен.

Пирĕн патшалăхра халăх пуринҫен ытла çĕр ĕçлесе, тырă туса пурăнаҭ. Тырă тумасăр урăх ĕссем анҫах туса тăранса пурăнаймасҭ. Çавăнпа тырă пулмасанах, вăл урăх ĕç ĕçлесе укçа тупайман пирки, выçă лара пуçлаҭ. Çак йулашки çулсенҫе пĕр çулта выçлăх пулмасăр иртмен пулĕ. Пĕр çĕрте тырă пăртак пулнă пек пулаҭ, анҫах çав çулах тепĕр тĕлте выçлăх пулаҭ. Ăçта та пулсан выçлăх пулаҭ-ех. Çулĕ-çулĕпе выçлăх темиçе кĕпĕрнере пулаҭ. Вара темиçе кĕпĕрнери халăх выçа пуçлаҭ. Выçлăх пит вăйлă пулнă çулсенҫе, выçлăхпа нумай халăх аптăратнă çулсенҫе правительство халăха тырă хыснаран пара пуçлаҭ.

Кăçалхи пек выçлăх халиҫҫен те пулман пулĕ. Вăл 1891—1892 çулта пулнă выçлăхран та пысăкрах, кăçал тырă 28 кĕпĕр нере пĕтĕмпех пулман. 1891 çул вырăнĕ вырăнĕпе ыраш наҫар пулнă пулсан та, çур тырри пăртак самайтарах пулнă-ҫĕ Кăçал апла мар. Ыраш çук çĕрте çур-тырри те çук. Çавăнпа август уйăхĕнҫех çав кĕпĕрнесенҫе тĕлĕ-тĕлĕпе халăх выçа пуçларĕ. Халĕ ĕнтĕ çав кĕпĕрнесенҫе пур йалсенҫе, пур вырăнсенҫе те выçман халăх çук. Хăш тĕлте выçăпа пит аптăра пуçланă. Бугульма уйасĕнҫе хресҫенсем икел çăнăхĕ, йе măйан хушнă çăнăхран тунă çăкăр çийеççĕ. Анҫах çав çăкăра та тăраниҫҫен çийеймеççĕ, ăна та кун сиктерсе анҫах çийеççĕ.

Выçлăхпа пĕрле тĕрлĕ ҫирсем сарăла пуçларĕç. Тĕрлĕ тĕлтен, тăранниҫҫен çийеймен пирки халăх ҫирле пуçларĕ, тенĕ хыпарсем килеççĕ.

Çитменнине тата кăçалхи выçлăх урăх йенҫен те хăрушăрах. 1891 çулта правительство пĕр хăй вăйĕпе анҫах халăха пулăшса çитерейместине курса. ахаҫ çынсене те выçă

аптăранă çынсене пулăшма май, ирĕк панă-ҫĕ. Вăл çул земствосем те, хуласем те, ахаҍ çынсем те выçă аптăранă хăлăха пит хытă пулăша пуçларĕç. Вĕреннĕ çынсем нумайĕшĕ, арçынсем те хĕр-арăмсем те, хăйсен аҫисене, хăйсен ĕçĕсене пăрахса, йалсене халăха пулăшма кайа пуçларĕç. Вĕсем хăйсен вăйне хăйсен мулне шеллемесĕр, халăхшăн ĕçле пуçларĕç. Вĕсем ĕçленĕ тăрăх, тĕрлĕ тĕлте темĕн ҫухлĕ столоваясем, больницасем, пріютсем пула пуларĕç. Вăл çул чиновниксем никам та халăха тăрантма, халăхшăн ырă ĕç тума ҫармарĕç.

Кăçал, выçлăх 1891 çулхинҫен вăйларах пулсан та, апла мар. Халăха продовольствіе парас ĕçе кăçал чиновниксем пĕтĕмпех хăйсен аллине илҫĕç. Вĕреннĕ çынсем йала кайса, халăха патшалăхри ĕçсем çинҫен, халăхăн наҫар пурнăçĕ мĕнтен пулни çинҫен каласа ан кăтартҫăр тесе, чиновниксем кăçал вĕреннĕ çынсене халăха пулăшас тейекен çынсене йама пит канҫĕрлеççĕ. Ҫăнах, выçă аптăраннă çынна ан пулăш тейекен закон çук Çынна ырлăх ан ту, çынна выçă вилĕмрен ан хăтар тейекен закон темĕнле усал, темĕнле наҫар патшалăхра та çук. Анҫах çапах та, кам та пулсан хăй тĕллĕн йала кайса хăй тĕллĕн халăха пулăшас тесен, чиновниксем ăна темĕн тĕрлĕ канҫĕрлеççĕ. Унăн тĕрлĕ чиновниксене прошеніесем парса вăхăт иртерес пулаť. Ҫас-ҫасах тата, çын «шанҫăксăртарах» пек туйăнсан, чиновниксем ăна йала каймa пĕтĕмпех ҫараççĕ. Çапла вара çав çыннăн выçă аптăраннă çынсене пулăшма кăмăлĕ темĕн тĕрлĕ пулсан та, пулăшаймасť. Пур çын та укçа парса анҫах пулăшаймасť, мĕнле те пулсан ĕçпе те пулăшма пултараť: йе ҫирлĕ çынна пăхма, йе столоваясенҫе апат пĕçерме, йе мĕн те пулсан урăх ĕç тума пултараť.

Укçапа пулăшас тейекен çынсем те, хăйсем выçлăх вырăна кайса пулăшма пултараймасан, укçине чиновниксене парасшăн пулмаççĕ, мĕшĕн тесен вăл укçа выçă аптăранă çынсем патне ҫас-ҫасах ситеймест, чиновниксен аллинҫех пĕтет.

Çапла, выçă аптăранă халăха кăçал пĕр правительство анҫах чиновниксем урлă пулăшма пултараť. Анҫах чиновниксем халăхшăн йепле тăрăшни паллă. Халăха кирлĕ вăхăтра пулăшас, халăхшăн аван тырă илес тесе, питех тăрăшмаççĕ.

Ҫӑнах та, продовольствіе ӗҫӗ чиновниксен аллинҫе темӗн тӗрлех аван пымасҭ. Вӑрлӑх илме министерство укҫа паҫӗ. Анҫах хӑш-хӑш вырӑнта вӑрлӑх, акма вӑхӑт иртсен анҫах, ҫитнӗ. Ытти тӗлсенҫе чиновниксем илнӗ вӑрлӑх нимӗне йурӑхсӑр пулнӑ: вӑрлӑх шӑтаймассине пӗлсе, нумай тӗлте хресҫенсем вӑрлӑха панӑ тырра авӑртса ҫинӗ. Анҫах хӑш тӗлте вӑрлӑха панӑ тырӑ авӑртса ҫиме те йурӑхлӑ пулман. Ҫавӑнпа, хресҫенсем акаймасӑрах йулӑн.

Ҫиме паракан ыраш та нумай тӗлте нимӗне те йурӑхсӑр пулаҭ. Хаҫетсем ҫинҫе ҫиме паракан ыраш нимӗне те йураманнине ҫас-ҫасах ҫыраҫҫӗ.

Пӗр хаҫет ҫинҫе ак ҫапла ҫырнӑ: «Царицынра Хусан кӗпӗрнинҫи хресҫенсем валли илнӗ ыраша вагонсем ҫинҫен баржасем ҫине куҫарнӑ. Пӑхнӑ вагонсенҫе ыраш пуринҫе те наҫар пулнӑ. Хӑш-хӑш вагонсенҫе йурӑхлӑ ыраш пӗр кӗрепенкӗ те пулман, темиҫе тӗслӗ курӑк вӑрлӑхӗсем анҫах пулнӑ. Вагонсенҫе нумайӗшӗнҫе ыраш ҫӗрӗ пулнӑ, хӑш-хӑшинҫе пиҫсе ҫӗре пуҫланӑ, хӑшинҫе шӑтса салатланса кайнӑ. Ҫав тырра, темӗн пек наҫар пулнӑ пулсан та, ҫарман, Хусан кӗпӗрнине йанӑ. Ҫапла, Хусан кӗпӗрнинҫи выҫӑ хресҫенсем ҫав тырра ҫӑкӑр туса ҫимелле ӗнтӗ!» тенӗ.

«Царицынскій Вѣстник» тейекен хаҫетра ак ҫапла ҫырнӑ: «Хусан земстви валли илнӗ 6 милліон пӑт ыраш нарса илнӗ хакне тӑраймасҭ. Ыраш пӗрҫисем хушшинҫе темӗн ҫухлӗ пукра пӗрҫисем, наҫар вир, йыт пырши пӗрҫисем, мӑйан пӗрҫисем. Сентябрь уйӑхин 26 кунӗнҫе баржасем ҫине куҫарнӑ тырӑ пуринҫен ытла наҫар-ҫӗ: № 277,770 вагонра аван тырӑ вырӑнне ыраш кӑшӑл вӗҫӗ кӑна. Ыраша баржасем ҫине куҫарнине Хусантан губернское присутствіерен йанӑ чиновниксем пӑхса тӑраҫҫӗ. Тырра баржасем ҫине куҫарнине пӑхма августӑн 26 кунӗнҫе генерал Павлов килҫӗ. Анҫах вӑл килсен те вӑл килиҫенхи тыррах куҫараҫҫӗ. Ҫав ыраша курнӑ ҫынсем, вӑл ыраш ҫынна мар, выҫӑха ҫиме анҫах йурӑхлӑ, теҫҫӗ. Вӑл ыраша Кавказра илнӗ», тенӗ.

Ҫакӑн пек наҫар тырӑ та анҫах тӑраниҫҫен ҫиме ҫакланмасҭ. Ӑна та ҫитӗннӗ ҫын пуҫне уйӑха пӗр пӑт, ҫамрӑксене ҫур пӑт анҫах параҫҫӗ. Вырӑнӗ вырӑнӗне ӗҫе йурӑхлӑ ҫынсене нимӗн те памаҫҫӗ. Мӗне тӑраҭ вара пӗр пӑт ыраш! Куна пӗр кӗрепенкӗ ытларах анҫах тивет вӑл. Темӗн тӗрлӗ сахал ҫисен те, сывӑ ҫынна вӑл пӗр куна ҫитеймест.

Çитменнине тата, хресҫен аллине кĕриҫҫен çав ыраш пĕр пăтран та ҫакаҫ. Тырă ҫĕрĕскер йе типсе ҫакаҫ, йе тĕрлĕ чиновниксем хăйсем валли çаклатса йулаççĕ. Нижній-Новгородăн Горбатовскій уйасĕнҫе хресҫенсене продовольствіе ырашĕ панă ҫух, чиновниксем, темĕнле расходра кирлĕ тесе, кашни пăтран икшер кĕрепенкĕ тытса йулнă. Анҫах нимĕнле расход та пулман: хресҫенсем ыраша хăйсем хăйсен лашисемпе турттарса пынă. Гмутово вулĕсене Подъялиново вулăсĕнҫе хресҫенсене вăрттăн кайа виççе панă. Пĕр йалта хресҫенсем 21 пăт илес вырăнне 16 пăт анҫах илнĕ.

Çапла ĕнтĕ, хресҫенсем чиновниксем алли урлă аван тырă вырăнне наҫар тырă илеççĕ, ăна та кирлĕ таранҫен илеймеççĕ. Тата чиновниксем илсе панă тырă пит хакла ӳкет. Выçлăх вырăнсенҫе вĕсем çавăнти пуйансенҫен тырă илмеççĕ; унта илсен тырă йӳнерех те пулĕҫĕ, хресҫенсем ăна ҫасрах та илĕҫĕç. Çапла тăвас вырăнне, чиновниксем таçти айакри кĕпĕрнесене кайса илеççĕ. Айакран туртарса кӳнипе тырă хакĕ ӳссе кайаҫ; çитессе те вăл ҫас çитеймест. Çавăн пирки хресҫенсем тырă килессине кĕтсе, выçса лараççĕ.

Мĕншĕн чиновниксем çапла тăваççĕ-ши?

Мĕншĕн тырă çывăхрах çĕртен илместĕр тесен, вĕсем—пире вĕттĕн-вĕттĕн илме хушман теççĕ. Анҫах вĕсен çак сăмахĕ питех тĕрĕс мар. Çывăх çĕртен илме май пулсан, вăл халăхшăн йӳнтерех те, авантарах та, çăмăлтарах та пулсан, мĕншĕн çывăх тĕлтен илес пулмасҫ? Акă мĕншĕн вĕсем çапла тăваççĕ. Çывăх çĕртен тырă илсен, чиновниксене ĕç пумай пулаҫ; вĕсен тырă пăхас пулаҫ, сутулашас (калаçас) пулаҫ, сутăн илес пулаҫ. Инçетрен илсен вĕсен пĕр хуйхă та улм асҫ. Вĕсем мĕнле те пулсан хуçана килĕшеççĕ те, вара пурнете пĕр хуçа тăваҫ. Чиновниксем йăванса кăна выртаççĕ. Хуçи мĕнле тырă пуçтарни, тыррине мĕн хака хуни, илнĕ тырра вырăна хăçан çитересси çинҫен вĕсем шухăшласа та пăхмаççĕ. Вĕсем вĕт халăха ырă тăвас тесе пурăнмаççĕ. Вĕсен ĕмĕрĕнҫе пĕр шухăш: хăçан уйăхăн 20 кунĕ çитĕ-ши, вара шалу илĕтĕм теççĕ.

Вĕсем çапла шухăшлаççĕ, анҫах халăх выçă антăраса пĕр çăкăр çинҫен анҫах шухăшласа тăраҫ. Акă тата хĕл çите пуçларĕ. Пӳртне хутса ăшăтма хресҫенсен вутă та çук, улăм та çук. Хресҫенсем сивĕ пӳртре шăнса выçса ларĕç. Сивĕпе выçă пирки хресҫенсем, вĕсен аҫисем тĕрлĕ ҫирпе ҫирле пуçлĕç. Çитес кунсенҫе хресҫенсене тĕрлĕ ҫирсем, шăнасси, выçă антăрасси анҫах кĕтсе тăраççĕ.

*С. Н.*

---

# Çĕре йалпа (обществопа) тытса тăрасси çинҫен.

Пĕлтĕрпе кăçал çĕр çинҫен нумай калаçаççĕ. Нумай çынсем çĕре пĕтĕмпех хресҫенсене парасшăн тăрăшаççĕ. Ыттисем ăна ĕлĕкхи хуçисенех хăварасшăн тăрăшаççĕ. Çĕре кама парсан тĕрĕс пуласси паллă: ăна хресҫенсене парас пулаť. Улпутсем çĕре ĕçлемеççĕ. Вĕсем çын алли ĕçĕпе анҫах пурăнаççĕ. Çĕре пурнете хресҫенсем ĕçлеççĕ. Çавăппа ăна пурнете хресҫенсене памалла теççĕ. Çĕре хресҫенсене пама кирлине улпутсем те, кураççĕ. Анҫах вĕсем çапах та пама шухăшламаççĕ.. Вĕсем калаççĕ: Хресҫен ҫăн наҫар пурăнаť, анҫах вăл çĕр сахалтан килмест, çĕре пĕтĕм йал халăхĕ пĕрле тытса тăнăран килет, теççĕ. Вĕсем çĕре килсĕрен ĕмĕрлехе уйăрса, уйрăм тытса тăмалла тăвасшăн. Пуçлăхсем те вĕсен майлă. Вĕсем йат çĕрне ĕмĕрлехе уйăрса илме ирĕк паракан закон кăларҫĕç. Нумайах пулмасť, тата çĕре саклата хума май паракан закон кăлармалла турĕç. Ку законсене икĕшне те хресҫенсене йат çĕрне уйăрса илме май парас шухăшпакăларнă. Ҫăнах та хăшĕ аванарах-ши? Халăхпа пĕрле тытса тăни аван-ши, йе кашни уйрăм ĕçлесе пурăнни аван-ши?

Пирĕн йенҫи хресҫенсем халиҫҫен çĕре пĕтĕм йалпа тытса тăнă. Вăхăтран вăхăта вăл çĕре йат тăрăх уйăрнă. Çапла пурăнни вăл пит аван. 1. Çĕре йат тăрăх уйăрса тăрсан, пур çынна çĕр пĕр пек тивет. Çĕр уйăрнă хыççăн хăш семйе ўсет, хăшĕ ҫакаť. Çĕре вăхăт сиктерсе йал тăрăх уйăрса тăмасан, ҫакнă семйене та çĕр нумай тивĕ-ҫĕ, ўснине сахал тивĕ-ҫĕ. Халĕ апла мар, тĕнҫе çуттине курнă ҫун пурте çĕр илет. Вăл ҫăнах çапла пулмалла. Çĕр вăл ĕçпе тупнă йапала мар. Вăл пĕтĕм тĕнҫе тивĕçĕ. Тĕнҫе тивĕçĕ

пурнете тивмелле. Епир, кайран çуралниеем те, малтан çуралнисем те, — пурте пĕр тан, пурте çын. 2. Çĕре пĕрле тытса, вăхăтран вăхăта уйăрса тăни тата тепĕр йенҫен те аван. Йал çыннисем хăшĕ айакка ĕçлеме кайаççĕ. Вĕсен çĕрĕ ахаҫ йулаҭ. Сутма май пулсан, вĕсем сутса хăварĕҫĕç. Саклата хума май пулсан, вĕсем саклата хурса хăварĕҫĕç. Саклата илнĕ çын ăна сутĕ-ҫĕ. Анҫах кайран, вĕсен аҫисем киле таврăнсан, вĕсене çĕр пулмĕ-ҫĕ. Халĕ айакка кайакан çынсем те çĕрсĕр йулаймаççĕ. Пĕрлехи çĕре вĕсем сутаймаççĕ. Ун вырăнне, вĕсен аҫисем киле таврăнсан çĕрлĕ пулаççĕ. Çапла ĕнтĕ çĕре, халхи пек, пĕтĕм халăхпа тытса тăни аван.

Анҫах хресҫенсене уйрăм пурăнмалла тăвас тейекенсем калаççĕ: хресҫенсем халĕ çĕре кашни 12 çултан уйăраççĕ. Вуник çулҫен пĕр ана акса тăратăн, унтан сана тепĕр ана тивет. Çĕр йаланах пĕр алăра тăмасҭ. Пĕр алăра тăрсан, ăна хуçи аванлатма тăрăшĕ-ҫе: тирĕслĕк тăкĕ-ҫĕ, тункатасене тикĕслĕ-ҫĕ, çумне тасатĕ-ҫĕ. Халĕ анана аванлатсан та, вăл çынна кайаҭ. Çавăнпа хресҫенсем хăйсем çĕрне аванлатма тăрăшмаççĕ. Тырри те вĕсен çавăнпа наҫар пулаҭ. Ана ĕмĕрлĕхе тивсен, ăна кашни хăй валли аванлатма тăрăшĕ-ҫĕ. Вара тырă та аван пулĕ-ҫĕ, теççĕ.

Вĕсем калани тĕрĕс мар. Хире пит ҫас-ҫасах уйăрмаççĕ. Тирĕслĕк тăкас тейекен халĕ те тăкма пултараҭ. Вуник çулҫен ун усси тухаҭ. Пĕрре мар, текиçе тăксан та, ĕç сайа каймасҭ. Вуник çул хушши пысăк. Унҫен 4 хут ыраш, 4 хут çур тырри акса илетĕн. 8 çулҫент ырă çĕртен сĕтекен нумай çăтаҭ. Тымар-тĕмерсене кăклас тĕлĕшĕнҫен те çаплах. 12 çулҫен ĕç усси тухмаст тесен, нумайрах çул сиктерес уйăрмалла тăвас пулаҭ. 15 çул урлă уйăрсан аван пулсан, халăх 15 çул урлă уйăрмалла тума пултараҭ. Çитменнине тата, халăх пухăвĕ, кашкăр пухăвĕ мар. Йурăхсăр çĕре аванлатнă çынна вăл таврма пĕлĕ. Йе вăл аванлатнă çĕре ăнах хăварĕ, йе укçа тӳлĕ йе урăх майлă таврĕ.

Тата калаççĕ: çĕре йалĕпе тытса тăрсан, хресҫен пурăнăçĕ нихçан та тӳрленес çук, теççĕ. Ку сăмахсем те тĕрĕс мар. Хăш тĕлте çĕре уйрăм тытса тăракан çынсем пур. Анҫах вĕсен хушшинҫе те пашасăррисем нумай. Вĕсен хушшинҫе те çĕре наҫар ĕçлекенсем нумай. Çĕре аванлатма уйрăм пурăнакансене мар,

пĕрле тытса тăракансене аван. Тымар кăклас пулсан, тунката тикĕслес пулсан, аван вăрлăх илес пулсан, машина туйанас пулсан,—ăна пĕр çын тăваймасть: йалĕпе тума вăл ĕç çăмăл. Хăшхăш тĕлте йалĕпе тухса лаҫакаран шыв сăхăнмалли канав алтаççĕ; çарансен хĕррине, ишĕлесрен, йывăççем лартаççĕ. Пĕҫҫем вăл ĕçсене тума йывăр. Халăх сурать, кӳлĕ тăвать; пĕҫҫен сурать, типсех пырать.

Тата калаççĕ: хресҫене хире виç пусса уйăрни пĕтерет. Хире нумай пусса уйăрас пулать. Тырă хушшинҫен курăк акас пулать. Хире нумай пусса уйăрма йалĕпе килĕшме йывăр. Пĕрерĕн çынсем ҫасрах ӳкĕте килеççĕ Çĕре килсерен уйăрсан, хресҫенсем хире нумай пусса уйăрĕҫĕç, теççĕ.

Ку та тĕрĕс мар. Улпутсем ĕлĕкренпех уйрăм пурăнаççĕ. Çапах нумайĕшĕ халĕ те виçĕ пусса уйăрса пурăнаççĕ. Нумай пуссе уйăрасси уйрăм пурăннинҫен килмест. Уйрăм пурăннинҫен килнĕ пулсан, ĕлĕкренпех уйрăм пурăнакан хресҫенсем виçĕ пуса уйăрассине пăрахнă пулĕ-ҫĕç. Халĕ вĕсем те, улпутсем те пăрахмаççĕ. Йалĕпе пĕрле тытакансем ĕçе ҫасрах тытăнаççĕ. Нумай пусса уйăрни аваннине пĕлсенех, вĕсем ĕçе пĕтĕм йалĕпе тытăнаççĕ. Мускав кĕпĕрнинҫе, Твер, Питĕр, Смоленск кĕпĕрнинҫе çапла пулнă. Çĕре пĕрле тытни вĕсене ҫармасть.

Тата калаççĕ: йалпа тытнă пирки анасем кĕçĕн пулаççĕ; вĕсем тĕрлĕ çĕрте выртаççĕ. Вăл аван мар, теççĕ.

Вăл ҫăнах та аван мар. Ăна аван тесе кам калĕ? Анҫах килсерен уйăрсан та, анасем сарăлас çук. Пĕр хуçанăн 2 тесетине çĕр пултăр. Унăн 4 ывăл пултăр. Тăвата ывăлне çуршар тесетине анҫах тивет. Ывăлĕсен тата виçшер ывăл çуралтăр. Вĕсене çур теçетинен виççĕмĕш пайĕшер анҫах тивет. Унта çурт лартсан, акма пĕр каса анҫах йулать. Ана кĕçĕнни çĕре йалпа тытнăран килмест, çĕр сахалтан килет. Тĕрлĕ çĕрте выртни акă мĕнрен килет. Пĕр çĕрте анҫах парсан, хăшне çара аван çĕр тивет, хăшне ҫуллă çĕр тивет. Кăна ухмах та пĕлет.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Халăх пурăнăçĕ наҫарри ҫи малтан çĕр сахалран килет. Халĕ çĕр улпутсен аллинҫе, удĕл аллинҫе, пупсен аллинҫе нумай. Вĕсене хресҫене парсан, анасем те сарлака пулĕҫĕç, тырă та авантарах пулĕ-ҫĕ. Тата хресҫене куланай пысăкки пит хĕсет: унăн пĕтĕм укçи куланӑйа кайаҫ. Аван плуксем, машинасем илме укçа çук. Машинасем те ытла хаклă. . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . Çитменнине тата пирĕн хура халăха вĕренменни хытă кансĕрлет. Çĕр пулсан, ĕçлеме аван машинасем пулсан, вĕренни пулсан, халăх антарамĕ-ҫĕ. Халăхран пухнă хысна укçи вырăнлă çĕре кайнă пулсан, халăх халхи пек тĕттĕм пулмĕ-ҫĕ. Хура халăх çĕр çукран, машинасем илме укçа çукран, куланӑй пысăкран, вĕренменрен асап тӳсет. Ку асапсем халăх патшалăх ĕçĕсене тусa тăма хăй ирĕк илсен тин иртĕç.

Çĕре килсерен уйăрни усă кӳрес çук. Парас мар тийекен улпутсемпĕн анҫах аван пулĕ. Вăл йапала çĕрĕсене Халăх çĕр ыйтаҫ, ăна уйрăм пурăнма май парасшăн. Халăх çăкăр ыйтаҫ, ăна ҫул парасшăн.

---

## Çĕре килсерен уйăрса тытса тăни камшăн усăлă?

Епир маларах каларăмăр: çĕре пĕтĕм халăхпа пĕрле татса тăни аван, апла тытса тăни халăха сийен тумаст, терĕмĕр.

Хура халăхăн пурăнăçĕ йывăр. Анҫах вăл çĕре пĕрле тытнăран мар, çĕр сахалран, халăха пур йенҫен те хĕснĕрен, тата пирĕн патшалăхри йĕркесем йурăхсăртан килет.

Çĕре халăхпа тытса тăрас йĕркене пăрахăç тăвас пулмаст. Вăл йĕркене пăрахăç туни хресҫенсенҫен нумайĕшне сăтăр тăвĕ.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Халĕ тата çĕре килсерен уйăрни уйăрса илекенсене мĕн усă кӳнине тĕпҫесе пăхăпăр.

Ҫӗре килсерен уйӑрсан, вӑл вара пӗтӗм халӑх тивлетӗнҫен пӗр ҫын тивлеҫӗ анҫах пулса тӑрать. Епӗ укҫалла лаша илетӗп те, вӑл лашана хамӑн тетӗп. Ӑна епӗ сутма та, ахаҫ пама та пултаратӑп. Унпа хам мӗн тӑвас тенӗ, ҫавна тӑватӑп. Ҫӗре килсерен уйӑрсан та ҫаплах пулать. Хуҫа хӑйне тивнӗ пайӗне, хӑй мӗн тӑвас, тенӗ ҫавна тума пултарать. Вӑл ӑна сутма те, парнене те, саклата хума та пултарать.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Халӑх ҫӗрӗ пӗтӗм халӑха усӑ кӳрет. Йаппа тытса тӑрсан, пӗтӗм йала кайать; темиҫе йал пӗрле тытсан, темиҫе йал халӑхне тӑрантарать. Ҫӗре халӑхпа тытса тӑни кашни ҫынна ӗҫлесе тӑранса пурӑнма май парать.

Ҫӗре пӗр ҫын тивӗҫӗ туни халӑха мар, уйрӑм ҫынсене кӑна усӑ кӳрет. Ҫӗре ку йӗркепе тытни ҫӗр нумай тытакансемшӗн, . .
. . . . . кӑна аван. Ку йӗрке ҫӗрлӗ ҫынсене ҫӗрсӗррисен аллине пуйма май парать. Вӗсене пӗр ӗҫлемесӗр ҫӗр парса, ҫын тытса ырӑлӑх курса ларма май парать.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Хресҫенсем тӗлӗшӗнҫен каласан, вӗсене ку йӗрке усса пырас ҫук. Хресҫенсене, килсерен уйӑрсан та, пӗҫӗкҫеҫ татӑксем анҫах тивӗҫ. Вӑл татӑксене темӗн ҫухлӗ саклата хурсан та, сутсан та, вӗсенҫен нумайах усӑ курас ҫук.

Пӗтӗм халӑх тытас йырӑппе уйрӑм ҫынсем тытмалла туни хура халӑх ҫинех ӳкӗ, вӗсенех усал тӑвӗ. Вӗсенҫен нумайӗшӗ ҫӗрсӗр тӑрса йулӗҫ, ҫӗрсӗр тӑрса йулсан, ураланма шанҫӑк сахал вара.

Ҫӗре уйрӑм ҫынсен тивӗҫӗ тусан, вӑхӑтран вӑхӑта уйӑрса ҫӗре пурнете пӗр тан тивмелле тӑвасси иртет. Акӑ пирӗн йенҫе халех килсерен уйӑрас тесен; тӑватӑ йатлӑ киле 12 тесетине тивмелле. Ӳлӗмрен, пӗр 20 ҫул иртсен, вӑл семйере тен пӗр 12 йат пулӗ. Вӑл йатӑн ҫав 12 тесетинепех пурӑнмалла пулать. Кашни йата пӗрер тесетине анҫах тивет. Тата 20 ҫултан тен вӑл килте

36 йат пулĕ. Вăл 36 йата çапах çав 12 теçетине анҫах ҭивет. Кашни йата тесетинен виççĕмĕш пайĕ анҫах тивет. Пурăн вара семйипе çав 50—60 касă çĕр çинҫе! Унта çуртна та ларт, пахҫăна та ĕрҫет, тыррăна та ту!...

Тепĕрин халĕ 12 йат. Вăл 12 йата 36 тесетина тивет. Хăш ҫух пĕр 30—40 çултан, ун пек семйерен пĕр-ик çын анҫах тăрса йулаҭ; вĕсене вара кашшине 18 теçетине тивет.

Çапла ĕнтĕ халĕ тикĕс уйăрсан та, ӳлĕмрен, пĕр 20—30 çултан, хăшни çĕр 5—6 касă анҫах йулĕ, хăшин 5—6 теçетине пулĕ.

Пĕр ăслă çын, Чернышевскій, кун тĕлĕшĕнҫен акă мĕн çыраҭ: Захарăн икĕ ывăн пулнă: пĕри Иван, тепĕри Петĕр. Иванăн 10 ывăл çуралнă, Петĕрен пĕр ывăл кăна çуралнă. Петĕр ывăлне лешсенҫен çĕр 10 хут нумайрах тивет. Сахарпа пĕрле тата виç пĕр тăван пурăннă. Вĕсенҫен пĕри Сидор, тепĕри Карп, тата тепĕри Хĕветĕр йатлă пулнă. Вăл виçĕ пĕр-тăванран пĕр Сидор аҫин кăна ывăл йулнă. Ыттисем пĕр тăкăмсăр вилсе пĕтнĕ çавăнпа виç пĕр тăван çĕрĕ виçĕшин те пер çынна анҫах йулнă. Вăл çыннăн çĕр Захарăннинҫен виçĕ хут нумайрах. Захар ывăлин ывăлĕ Иванăннинҫен 30 хут нумайрах.

Çапла ĕнтĕ, халĕ пурнете пĕр тан уйăрсан та, ӳлĕмрен хăшин темĕн ҫухлĕ çĕр пулĕ, хăшин пит сахал пулĕ. Хăшин çĕрĕ сухаламалăх та йулмĕ. Сахал çĕрне те пуйана сутмалла пулĕ.

Ун пек çын, ирĕккĕн ирĕксĕрех, хăйĕн çук çĕрне сутсан, çийелтен тата çав пуйан патнех тарçа кĕрĕшмелле пулĕ.

Пĕр çын аллине кĕрсе ӳксен, ураланма йывăр пулаҭ. Çавăнпа пуйан патне кĕрĕшнĕ çынсем çукран çука йерсе пырĕç. Ун пек çын нумайран нумай пулса пырĕ.

Халĕ халăх çĕрне саклата хума йурамаст. Çĕре килсерен уйăрсан, саклата хума май пулĕ.

Халĕ йат çĕрне крестьянскій банкаҫ саклата хума ирĕк паракан закон хатĕрленĕ Вăл закона ҫăнах кăларас пулсан, саклата хуракан нумай пулĕ: хăй пурăнăçне саклат укçипе тӳрлетес тесе, нумайĕшĕ, пĕр вăхăта анҫах тесе, йат çĕрне саклата хума тытăнĕç.

Анҫах ун пек ĕмĕт сайра хутра анҫах çитет. Çĕршĕн саклат укçи илсен, уншăн банка процент тӳлемелле пулаҭ. Ҫăвашсем ка-

лаççӗ: Пуйан укçи пуйтарат: çук çын укçине пӗтерет, теççӗ. Çавӑн пек, хӑшӗ процент тӳлесех пурӑнӑç вӗçне тухӗç. Кайран саклата хуна çӗрне те йӑлтах сутса йарӗç.

Италія йатлӑ патшалӑхра çапла, малтан хресҭенсене çӗре килсерен тытмалла тунӑ. Ку закона кӑларсан, пӗтӗм Италіяри хресҭенсем пӗҭӗкçӗ улпутсем пек пулса тӑнӑ. Пурте уйрӑм хӑй тӗллӗн пурӑна пуçланӑ. Пӑртак тӑрсан улпутсем тепӗр закон кӑларттарнӑ. Вӑл закон сахал çӗрлӗ çынсене хӑй çӗрне сутма хушнӑ *). Çавӑнпа, пурӑна-киле хресҭен çӗрӗ пуйансен аллине куçнӑ. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Çӗрсӗр йулас тӗлӗшӗнҭен анҭах мар, килсерен тытмалла туни тата урӑх йенҭен те усал. Халӑхпа пӗрле тытсан анасем пӗҭӗкçӗ пулаççӗ, теççӗ. Килсерен тытмалла тусан, анасем каллех пӗҭӗкçӗ пулӗç. Ун çинҭен епир маларах та каланӑ-ҭӗ. Мӗн калани çумне тата пӗр-ик сӑмах хушас тетпӗр. Çӗр тӗрлӗ çӗрте тӗрлӗ пулат. Пӗр çӗрте аван, тепӗр çӗрте наҭар. Килсерен уйӑрас тесен, çавӑн-

*) Кам ӗненменни Кауфман çырнӑ кӗнекене пӑхӑр. **Вӑл кӗнекен** йаҭӗ ак çапла: Ирландіяра çӗре тара илсе тӑни **çинҭен** (Аренда земли въ Ирландіи).

па, капни киле ç̆ӗр тӗрлӗ ç̆ӗрте памалла пулӗ. Тӗрлӗ ç̆ӗрте парсан, хресҫенсен ик-виç хăлаç ç̆ӗршӗн таçта-таçта куçса ç̆ӳремелле пулӗ. Куçса ç̆ӳренипе вăхăт нумай иртӗ, Халăхпа пӗрле тытса тăмалла тăвсан, ç̆ӗре пӗр вырăна пама май тупӗç. Халăх ç̆ӗре сана пӗр вахăта анҫах тивет. Çавăнпа пӗр вăхăтлăха наҫар ç̆ӗре нумайрах парсан та йурать. Пӗр 10—12 çултан вăл ç̆ӗр сан аллăнтан кайать. Сана каллех аван ç̆ӗр тивет. Килсерен уйăрса, ç̆ӗре пӗр вырăна анҫах парсан, вăл ç̆ӗр ӗмӗрлӗхе кайать. Наҫар пулсан та, аван пулсан та, ăна сана никам та улăштарса парас çук.

Çитменнине тата килсерен тытмалла тусан, хăш хуçанăн ç̆ӗрӗ çула нумай кайӗ. Çул—кирлӗ йапала, унсăр пурă ман çук. Хăш ҫух çула темӗн ҫухлӗ ç̆ӗр кайать. Хăшин мӗн-пурӗ те ç̆ӗрӗ 7 хăлаç пулӗ, унтан 5 хăлаçӗ çул валли кайӗ. Мӗн тăвас тийӗн?

Килсерен тытас пулсан, тата тӗрлӗ пысăк ӗçсене тума йывăр. Лаҫака типӗтес тесен, кӗтӳ валли вырăн хăварас тесен, мӗн тăвас тесен,—пӗҫҫен ăна йепле тăвайăн?

Пирӗн çын пӗрле пурăнма вӗреннӗ. Пӗрин пӗр йапала пулмасан, тепӗрин патне кайать. Хӗн килсен, кӳршӗ-аршă пулăшать. Улпутла, уйрăм пурăна пуçласан, кӳршӗ те пулмӗ, пӗр-пӗрне пулăшасси те пулмӗ.

Килсерен тытса тăни вăл улпут пек пуйан пулма хапсăнакансене анҫах кирлӗ. Анҫах халӗ улпут пек пулма хапсăнакансенӗн те нумайӗшин ӗмӗҫӗ çитмӗ. Хресҫенсенҫен нумайӗшӗ ç̆ӗрсӗр тăрса йулӗç, çын ӗçне ӗçлесе, çын ирӗкне туса, йӗрсе ӗмӗрне ирттермелле пулӗç.

# Çӗре йепле тытсан аван пулать.

Çапла ӗнтӗ, шухăшлама пӗлекен ç̆ӗре халăхпа тытас йӗркене пăрахăç туни хресҫене усă кӳрес çуккине курать. Халăхпа тытса тăрассипе пăрахăç туни нумайӗшне пӗр татăк ç̆акăрсăр хăварӗ, сахалăшне пуйтарӗ.

Пĕрле тытса тăрассине пăрахăç тăвас пулмаст. халх . . . çĕрĕ сене, . . . . . . . пурнете халăха памалла тăвас пулаť. Пĕтĕм çĕре пĕтĕм халăх аллине парса, ăна вăхăтран вăхăта танлаштарса уйăрса тăмалла тăвас пулаť.

Çĕре уйрăм тытни халĕ те, улĕмрен те усă кўрес çук. Вăл йĕрке çĕр пуйанĕсене анђах аван: вĕселе çын шăлĕпе мăйăр катма май параť. Çĕре халăх пĕрле тытни аван.

Йалсенђе халĕ ахаљ те çĕре пĕрле тытаççĕ. Вăл аван. Анђах вăл йĕркене тата аванлатас пулаť. . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Тата халĕ пĕр йалта йата нумайрах çĕр тивет, тепĕр йалта сахалрах тивет. Пĕр çĕрте йата 12 хăлаç тивет, тепĕринђе 100 хăлаç тивет. Кăна ўлĕмрен пурне те тикĕс тивмелле тăвас пулаť.

Кашни çынна: 1) çурт-йĕр çавăрмалăх, акса-ĕçлесе пурăнмалăх çĕр кирлĕ, 2) хуралтă çавăрмалăх, кăмака хутмалăх вăрман кирлĕ.

Ўлĕмрен çĕре пурнете пĕр тан уйăрас вăхăт çитсен, хăшĕ калĕç: кам мĕн ђухлĕ ĕçлейет, çавăн ђухлĕ парас пулаť! тийĕç. Тата хашĕ калĕç: Халхи пек, арçын йађĕ тăрăх уйăрас! тийĕç. Виççĕмĕш ушкăн калĕ: Кашни çын пуçне-арçынĕ-хĕрарăмĕ мĕнĕпе, ађи-тăђи мĕнĕпе—пурне те йат кăларас! тийĕ. Пирĕн шухăшпа виççĕмĕш ушкăн тĕрĕс калаť Пур çынна та, арçынне те, хĕрарăмне те, ваттине те, çамрăккине те—пурне те йат çĕрĕ парас пулаť. Вĕсем пурте çын. Пурте çимесĕр пур ăнаимаççĕ. Çавăнпа вĕсене пурне те çĕр парас пулаť. Ўлĕмрен, етем йăхĕ йышлăлан сан çĕр хĕсĕнсе килĕ. Ун ђух мĕн ĕçлейнĕ ђухлĕ пама çĕр çитмĕ. Хăш килте пĕр çитĕннĕ арçын пуçне 4—5 хĕр-арăм тивет, 2—3 ађа тивет. Хĕр-арăмсемпе ађасене çĕр памасан, ун пек çынна пурăнма халхи пекех йывăр пулĕ. Пурне те парсан, кашни çăвар хăй çĕрĕнђен тăранĕ. Ытлашши çăвар никамăн та пулмĕ.

Çĕре пĕтĕм халăха тикĕс уйăрас тесен, малтан çĕр ăçта мĕн ђухлине вăл йеплине, ăçта аваннине, ăçта нађаррине тĕпђесе тухас пулаť. Унтан йурăхлă çĕр мĕн пурĕ мĕн ђухлине шутлас пулаť. Унтан, мĕн пурĕ миçе çынне хисеп туса, кашни çынна мĕн ђухлĕ çĕр тивессине шутласа кăларас пулаť. Вара тин çĕрне пурне те пĕр пек танлаштарма тытăнас пулаť. Нађар çĕре нумайрах аваннине сахалрах; çĕр доходлă çĕртес ахалрах, доходсăр çĕрте нумай-

рах пamалла тăвас пулат҄. Нумайĕшин пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçмалла пулĕ. Анҫах пурте сасăртаках куçаймĕç

Çавăнпа, çĕре пурнете.пĕр тэн тума закон кăларсан, малтан хăш йенҫе çĕр ытлашши пулĕ, хăшинҫе сахал пулĕ. Ун ҫух ытлашши çĕре таврари çынсене тара парса тăмалла пулĕ. Пурнете пĕр тикĕс пултăр тесен, вăл тара укçине сахал çĕрлисене прĕк çĕре куçма пулăшĕ.

Акă пĕр вулăсра, икĕ вĕçĕнҫе, икĕ тĕрлĕ хресҫен пурăнат҄ пултăр- Икĕ вĕçĕнҫе те çĕр сахал пултăр. Анҫах пĕр вĕçĕнҫе хысна çĕрĕ пултăр, тепĕр вĕçĕнҫе çĕр ниçтан та илме май çук пултăр. çьрне хресҫенсене парсан. Ăна вăл вĕçĕнҫи хресҫенсем йышăнәç Анҫах вĕсен шĕн вăл çĕр ытла нумай; вĕсене йата 3 шер тесетине анҫах гивмелле, вĕсене 5 шер теçетине тивет Ытлашши тивекен 2 теçетинещĕн вĕсене тара укçи тӳлеттермĕлле тăвас пулат҄. Вăл укçа сахал çĕрлисене кивĕ вырăнтан çĕнĕ вырăна куçма пулăшма кайат҄. Пурăна киле çапла пур çĕре те пĕр тикĕс сарăлĕ.

Анҫах кун пек тума вулăсра ытлашши çĕр пулсан кăна йурат҄. Хăш вулăссенҫе ун пек тума çитĕлĕклĕ çĕр пулмĕ. Ун пек пулсан сахал çĕрлĕ вулăсран нумай çĕрлĕ вулăса куçармалла тăвас пулат҄.

Йалтан йала куçарас ĕçе вулăс пухăвĕ пăхса тăмалла тăвас пулат҄, вулăсран вулăса куçас ĕçе уйас пухăвĕ. уйасран уйаса куçассине кĕпĕрне пухăвĕ, кĕпĕрнерен кĕпĕрнене куçас ĕçе патшалăх пухăвĕ пăхса тăмалла тăвас пулат҄.

Çĕр пур тĕлте те танлашса çитиҫҫен, ытлашши çĕрлисем тара укçи тӳлесе тăрĕç, сахал çĕрлисене вăл укçапа пулăшса тăрĕç. Пурăна-киле ирĕк çĕрсене пурнете йышăнәç; ытла хĕсĕк çĕрте халăх кăшт сайраланĕ Вара пĕтĕм çĕре пĕтĕм халăх, пĕр-пĕринпе тангаштарса, тытса тăрĕ. Çĕре пĕр çын тытасси, унпа суту-илӳ тăвасси ăна саклата хурасси пулмĕ. Кашни çын хăйне тивĕçлĕ çĕрне хăй ĕçлесе, тутă пулса пурăнĕ.

Апла туни хресҫенсемшĕн те, хуласенҫе ĕçлекенсемшĕн те аван. Хресҫенсене пурне те ĕçлесе тăранса пурăнма май парат҄. Ун ҫух вĕсем пуйан çын патне çур хакпа кĕрĕшмелле пулмĕ. Кашни хăй ĕçлесе хăй ырăлăх курĕ. Хресҫенсен çĕр çителĕклĕ пулсан, вĕсен хушшинҫен хулана ĕçлеме кайакан çын сахал пулĕ Ĕç шыракан сахал пулсан, ĕç хакĕ хăпарат҄. Çавăнпа хулара ĕçлекенçем те нумайрах тӳле пуçлĕç. Çапла ĕнтĕ ку йĕрке хресҫеншĕн те, фабрик—савăтсенҫе ĕçлекенсемшĕн те аван.

*В. Иванов*

# Халăх пурнăçне çăмăллатас тесен мĕн тумалла?

Патшалăх вăйлă пуласси, унăн пурăнăçĕ малалла кайасси, патшалăхра ырă кун-çул пуласси—вăл пурте патшалăхри халăх ырă пурăнăçпа пурăннинҫен килет. Халăх ырă пурăнăçĕ—вăл çителĕклĕ пурăннинҫен, вĕреннинҫен, ирĕк пурăннинҫен килет.

Çав йапаласем пулҫăр тесен, çĕре пурнете кам ĕçлес тейекенсене уйăрса памалла; куланайсене, налогсене пуйансенҫен нумайрах, çук çынсенҫен сахалрах илмелле тумалла; савăтсенҫе, фабриксенҫе кунне миçе сехет ĕçлемеллине закон кăлармалла; ĕçре çӳрекен çынсене çын йеверлĕ пурăнмалăх тӳлемелле тумалла. Хут вĕренес тĕлĕшрен пурте укçасăрах вĕренме пултарҫăр. Кам вĕренме пултаракан çынна ан ҫарҫăр. Суд йĕрки пуриншĕн те пĕр пек пултăр. Судьясем пур ĕçре те хăйсем пĕлнĕ пек, хăйсем ҫĕри каланă пек сут туҫҫăр. Çын елекленĕ тăрăх, йе çын шанҫăксăр пек туйăннă тăрăх никама та тытса ан хупҫăр. Судья айăп тупса тытса хупма хушсан анҫах хупма йуратăр. Тĕн тĕлĕшĕнҫен никама та ан хĕсĕрлетҫĕр. Патшалăхра пурăнакан халăха тĕн тăрăх, йе ҫĕлхе тăрăх уйăрмалла ан пултăр. Патшалăхра пурăнакан пур халăхшăн та калаçма, кĕнеке-хаçет çине çырма, пуçтарăнса калаçма, ушкăнсем (союзсем) тума ирĕк пултăр. Патшалăх ĕçĕсене туса пурăнас ĕç пĕтĕм халăх аллинҫе пултăр.

## I.

Вĕреннĕ, маларах кайнă патшалăхсенҫе те (Австрія, Франція, Германія, Италіяра, Соединенные-Штаты тейекен пат-

шалăхра) патшалăх ĕçĕсене йепле туса тăнние халăх суйласа йанă çынсем тĕрĕслесе тăраççĕ. Çак çынсене халăх кашни виç-тăват çултан çĕнĕрен суйлаҋ. Çак халăх суйланă çынсем патшалăхра аслă хулана (столицана) кайса. «Халăх суйланă çынсен пухăвĕ» тăваççĕ.

Патшалăхри ĕçсене пуçлăхсем закон çине çырнă пек тĕплĕ туса пыраççĕ. Никам та хăй ирĕкĕпе хăтланмаҋ.

Закон калапă пек туманшăн кирек мĕнле ҫинлă çынна та, министра та суда парса, пур халăха та пĕлтерсе, суд тума пултараççĕ.

Кивĕ йĕрке вырăнне çĕнĕ йĕрке тăвас тесан, патшалăх йĕркисене пăхса тăма халăх суйласа йанă çынсен аллине парас тесен ҫăн малтан халăх суйласа йанă çынсем патшалăхри тĕп законсене çĕнĕрен кăларакан Пухăва пуçтараççĕ.

Халăх суйласа йанă çынсен пухăвĕ кивĕ законсене нумайĕшне пăрахăçа хăварса, вĕсен вырăнне çĕнĕ саконсем кăларнă. Вăл кирлĕмаршăн хĕстерекен йĕркесене пăрахăçа хăварса, патшалăхри пур пурăнан халăхшăн ирĕклĕх тунă. Вăл патшалăха мĕнле йĕркепе тытса тăрсан авăн пуласшне кăтартаҋ. Патшалăхăн тĕп законне кăларса вырăна кӳме пултараҋ.

Ҫăн малтан пуçтарăнна халăх пухăвĕ законсем йепле пуласси çинҫен канаш кăна парсан. ун нимĕн усси те пулас çук. Апла вăл законсене çапла тусан авăн пулĕҫĕ, налогсене улăштарсан авăн пулĕҫĕ тесе шухăшласа кăна ларĕ. Сăмахпа кăшт калаçкаланн закон каларни пулмаҋ вăл. Вĕсем каланине итлесе вырăна кӳме те пултараççĕ. вырăна кӳмесĕр те хăварма пултараççĕ. Пур ĕçсене те каллех ĕлĕкхи пекех министрсем йе «Государственный Совѣт» туса пырĕ. . . . . . . . . . . . . . Хайхи вара пыра-киле патшалăх йĕрки. патшалăх законĕсем ĕлĕкхи пекех йулĕç.

Суйласа йанă çынсен пухăвĕ законсем кăларма пултарҫăр. Çавăн пек пуху анҫах Россіяна çука йуласран хăтарма пултараҋ; пĕр вăл анҫах пăлхава ҫарма пултараҋ. Çав пуху анҫах Россія халăхне телей, ирĕк тупма çĕнĕ çул кăтартса парĕ.

Халĕ халăхăн патшалăх ĕçĕсене туса тăма ирĕкĕ тĕрлĕ патшалăхра тĕрлĕ. Франціяри, Швейцаріяри, Соединеные Штатыри,

Американи тата ытти патшалăхсенҫи те . . . налăх тытса тăрас йĕркене «республика» теҫҫĕ.

Республикапа пурăнакан патшалăхсенҫе пур ирĕк те (власть) халăхра, халăх суйласа йанă ҫынсен аллинҫе. Ун пек патшалăхсенҫе патша ҫук. Патша вилсен унхыҫҫăн ывăлĕ патша пулмаҫ. Патша вырăнне пĕр ҫынна . . . . . . . . . . суйласа лартаҫҫĕ. Суйласа лартнă ҫынна «президент» теҫҫĕ. Суйлама йе халăх суйласа йанă ҫынсем суйлаҫҫĕ, йе пĕтĕм халăх суйлаҫ. Президента ĕмĕрлĕхе суйламаҫҫĕ. 4 ҫула, йе 6 ҫула анҫах суйлаҫҫĕ. Хунă ҫулĕ иртсен, президент вырăнĕнҫен тухаҫ. Ун вырăнне урăх суйлаҫҫĕ.

Англіяпа Италіяра пур ирĕк те (власть) халăх суйласа йаланă ҫынсен аллинҫе Ҫапах вăл патшалăхсенҫе патша пур. Анҫах патшасене пур ĕҫе те хăйсен ирĕкĕпе тума памаҫҫĕ. Ҫак патшалăхсенҫе патшалăх пуҫлăхĕ король. (Унта патшана «король» теҫҫĕ.) Патшалăха вăл хăйĕн ывăлин аллине хăвараҫ. Анҫах Англіи королин ирĕкĕ французсен президентĕнҫен пĕр те ытла мар. Патшалăхри ҫапла йĕркене «парламэнтарна монархія» теҫҫĕ.

Германіяпа Австріяра патшалăх пуҫĕ патша йе король. Ку патшалăхҫенҫе ирĕк (власть) патшапа халăх суйласа йанă ҫынсен аллинҫе. Халăх суйласа йанă ҫынсен пухăвĕ (унта вĕсене «пала та» теҫҫĕ) законсем мĕнле пулмаллине калаҫ, куланайĕсем, налогсем мĕн ҫухлĕ пуҫтармаллине хураҫ. Паташлăхра мĕн ҫухлĕ килӳ, мĕн ҫухлĕ расход пулмаллине хисеплет. Патша ытти патшалăхсемпе килĕшет, вăрҫă тапратма пултараҫ, министрсене хăй суйласа лартаҫ. Ҫапла йĕркене вырăсла «ограниченная монархія» теҫҫĕ. Вăл патшанăн ирĕкне ҫакарни тени пулаҫ. Кун пек патшалăхсенҫе патшапа халăх суйланă ҫынсен пухăвĕ ҫас-ҫасах урлă пулкалаҫҫĕ. Ҫапла халĕ Венгріяра (вăл Австровенгрія патшалăх пайĕ) патша министра халăх суйлас мар тенĕ ҫынсене лартрĕ. Халăх суйласа йанă ҫынсен пухăвĕ патшалăх прихоҫĕне унăн расхоҫĕ мĕн ҫухли пулмаллине каласа памарĕ. Ҫавăнпа патшалăх пухăвĕ министрсэне шанми пулҫĕ. Халăх куланайсем тӳлеме пăрахрĕ. Ку йапала мĕнле пĕтесси паллă мар халĕ.

Патшалăхра патшана ашшĕ хыҫҫăн ывăлĕ ларса пыраҫ пулин те, пур ирĕк те халăх суйласа йанă ҫынсен пухăвĕ аллинҫе

пулсан, ҫапла йӗркене «конституціонная монархія» теҫҫӗ.

Патшалӑхри тӗп законсене ҫӗнӗрен кӑларма пуҫтаранна халӑх суйласа йанӑ ҫынсен пухӑвӗ мӗнле йӗркепе пурӑнсан авантарах пулмаллине калаҭ.

Халиҭен епир патшалӑха тытса тӑрас йӗркесем мӗнле пулнине, унта ирӗк кам аллинҭе йеплине каларамӑр. Малалла патшалӑх йӗркине тытса тӑма халӑх хушшинҭен суйлакан ҫинсене йепле йӗркепе суйламалли ҫинҭен калӑпӑр. Франціяра, Норвегіяра, Испаніяра, Германіяра, Америкари Соединенные Штатлара, тата урӑх патшалӑхсенҭе те, суйланӑ ҭухне пур ҫын та суйлама пултараҭ. Пур те пӗр пек сасӑ пама пултараҫҫӗ.

Хӑш-хӑш патшалӑхсенҭе пур ҫын та суйлама пултараймаҫҫӗ. Ҭухӑн ҫынсем, патшалӑхра ҭӑн нумай пулсан та, суйланӑ ҭухне сасӑ пама пултараймаҫҫӗ. Пухӑва пуртарах ҫынсем, пуйан ҫынсем, анҭах суйласа йараҫҫӗ. Паллӑ, ҫак «халӑх суйласа йанӑ ҫынсен пухӑвӗ» ҭухӑн ҫынсемшӗн ытлах тӑрӑшас ҫук. Вӗсене пуртарах ҫынсем, ҭинлӑ ҫынсем, улпутсем, хуҫасем, фабрик тытакаисем ҫывӑхрах пулӗҫ. Вӗсем вӗсенҭен куланай та, налог та сахалтарах илӗҫ. Хут рӗренес тӑлешрен, пур халӑх та вӗрентӗр тесе тӑрӑшмӗҫ. Хайсен йышшисене кӑна вӗрентесшӗн пулӗҫ.

Ҫавӑнпа, суйлас йӗрке ҭӑн аванни пур халӑх та пӗр тан пулса суйлани пулаҭ.

Патшалӑхри йӗркесене пӑхса тӑрас ирӗк халӑх суйланӑ ҫынсен аллинҭе пулсан, пур ҫын та пӗр тан сасӑ парса суйлама пултараҭ пулсан, ун пек патшалӑха халӑх ирӗкӗпе пурӑнакан патшалӑх теме пулаҭ. Вӗреннӗ ҫынсем ӑна «демократія» теҫҫӗ. Ку сӑмах грексен сӑмахӗ. Ӑна икӗ пайа уйӑрма пулаҭ. Пӗр пайӗ «демос»; вӑл халӑх тени пулаҭ. Тепӗр пайӗ «кратос»; вӑл сӑмах «ирӗкӗ» тенине кн лет. Ҫавӑнпа патшалӑх йӗркине туса тӑма халӑх аллине парас тийекенсене вӗреннӗ ҫынсем «демократы» теҫҫӗ.

Суйлас йӗркене: 1) пур халӑх та ҫуйламалла, 2) суйланӑ ҫӗрте пур те пӗр тан пулмалла, 3) суйланӑ ҭухне тӳрех пухӑва суйламалла, 4) сасӑ пама ҫынна пӗлтермесӗр памалла тӑвас пулаҭ.

Суйлаиӑ ҫӗрте пур те пӗр тан пулмалла тени вӑл—пӗр ҫын пӗр сасӑ анҭах хушмалла тени пулаҭ. Никам та икшер сасӑ йе ытларах ан хуштӑр.

II.

Халăх çак йĕркене суйланă пуху вара патшалăхра мĕнле йĕрке пулмаллине канаш туса кăларать.

Унтан халăх суйласа йанă çынсен пухăвĕ халăх пурнăçĕ çителĕклĕххине астумалла.

Тĕрĕс суйласа йанă çынсен пухăвĕ патшалăхра йĕркесем мĕншĕн пăсăлса кайнине, халăхăн ђухăн пурăнăçĕ мĕнтен килнине пăха пуçлĕç.

Ђăн малтан вĕсем çĕр мĕнле йĕркепе тытса тăмаллине пăхĕç. 1861 çулта, хресђенсене ирĕке кăларнă ђухне, нумай йалсенђе халăха тивĕçлĕ çĕртен 4-мĕш пайĕ анђах тивнĕ. Вал уне ђухнех йата теçетине те ђĕрĕк анђах тивнĕ. Хăш-хăш йалсенђен вăрмансене, çарансене касса илнĕ Унтан тата хăш-хăш сăмсалăхсене туртса илнĕ Халĕ çав сăмсалăхсем çинђен хресђенсен выђăхĕсене тыта-тыта хупса усă кураççĕ Халĕ хресђенсем çав сăмсалăхсене йе пысăк хак парса тара илсе гăмалла, йе нутравшĕн тӳлесе пурăнмалла. Çапла касса илнĕ сăмсалăхсене халĕ пурне те хресђенсене памалла.

Йалсенђен нумайăшĕ çĕре татăк-татăк панă. Пĕр татăкĕнђен тепĕр татăкĕ вуншар çухрăмра. Ку йапала татах хресђенсене кансĕр. Унпек татăксене виççе, çĕнĕрен йăран туса, пĕрле тăвас пулать.

1861-мĕш çултанпа (хресђенсене ирĕке кăларнăранпа) нумай вăхăт иртнĕ Хресђен халăхĕ унтанпа йышлăланнă Хресђене улпут аллинђен кăларнă ђухне çĕр найтах тивнĕ йалсенђе те халĕ ытла сахал тивет. Çакăн пирки ђухăнлăх пуçланса кайрĕ. Халĕ хресђенсене çĕнĕрен çĕр касса памалла Кашни килле мĕн ђухлĕ ĕçлеме пултарнă, çавăн ђухлĕ парас пулать. Хресђенсене удĕл çĕрĕсене, монастыр çĕрĕсене, кабинет çĕрĕсене памалла Вăл хисепе улпутсен, çĕр хуçисен çĕрĕсем кĕреççĕ. Ку çĕрсемшĕн хресђенсемшĕн укçа илес пулмасть. Унщăн хысна тӳлемелле.

Пĕђĕк хуласенђе пурăнакан çынсем, мĕщансем çĕр ĕçлесе пурăнанççĕ пулсан, вĕсене те хресђенсемпе пĕрех памалла. Вĕсенђен те çĕршĕн укçа илмелле тăвас пулмасть.

Анђах пурна-киле халăх каллех йышлăланса çитĕ. Çавăнпа халех çĕре аванлатма тăрăшас пулать. Ĕçлемелли йапаласене авантарахххисене туйанмалла Çĕр ĕçлес майсем аванлансан çав çĕртех тырă ытларах пулма пунтарать. Унта вара йышлă халăх та тă-

ранса пуранма пултарĕ. Çĕре аванлатвс тесен, çĕр ĕçлеме аван пĕлес тесен, хут вĕренес пулат. Çĕр ĕçлеме вĕрентекен школасене кайса вĕренес пулат. Хресçен аçисем çав школасене кайса вĕренсен, çĕре мĕнле аванлатмаллисене, мĕн тусан тырă аван пулмаллине пĕлĕç.

Пур çĕрте те укçа илмелли банк пек йапаласем тумалла. Кĕсем хресçене çĕр ĕçлеме машинасем илме кирлĕ. Аван вăрлăх туйанас тесен, выçăх-çĕрлĕх ăруне аваннине туйанас тесен, хресçене укçа кирлĕ. Çав йапаласене туйанма хресçенсене укçа илмелли банксем тумалла.

Тата çухăна йулакан хресçенсем çĕрĕсене сутма пуктараççĕ. Капла пуйантарах пурăнакан çемйе çухăн çынсен çĕрĕсене илеиле хăй улпут пулма пултарат. Çухăнсен каллех вĕсен тарçи пулса пурăнмалла пулĕ. Çавăнпа çĕре сутас йĕркене пĕтерме тăрăшас пулат.

Россiяра нумай кĕпĕрнере çĕре йалпа тытса тăраççĕ. Вăхăтвăхăт çĕре йат тăрăх уйăраççĕ. Вăл хăй пайне никама та ĕмĕрлĕхе сутма пултараймаст. Çухăн çыннăн аçисем пулсан, вĕсем те йата кĕреççĕ. Аçисем çитĕнсе йышлăлансан çухăн çемйе те хăй пурăнăçне уралатма пултарат.

Россiяра хăш-хăш тĕлте: Кiев, Черниговъ, Полтавв, Херсонск, Екатеринослав кĕпĕрнисенçе, кашни хăйне уйрăм çĕр çинçе лараt.

Халиçеп хресçенсем хăйсен йат çинçи çĕрĕсене сутма пултараймаш. Çĕнĕ йĕркесем пуçланса кайсан хресçенсене те, хăй çĕрне майлаштарма, мĕн тăвас тенĕ, ăна тума ирĕк памаллха. Çак йапала пулсан, çухăна йулна хресçенсем çĕрĕсене пуйансене сута пуçлĕç. Çапла вара çĕр каллех çук çынсенçен пуйансене куçа пуçлĕç.

Хресçенсем çĕрсĕр ан йулçĕр тесĕн, çапла закон кăларсан авантарах пулмалла: пур Россiяри çĕр те халăх аллинçе. Кам пĕçен ĕçлес тет, çемйепе, упкăнпа, йулташĕсемпе пĕрлешпе, вĕсене пурне те çĕр памалла тăвас пулат. Анçах пĕри те хăй вăйĕпе ĕçлесе пĕтерейми çĕр ан тыттăр. Ку йапалана вырăна кӳрес тесен çапла закон кăларма пулат, нихăш çемйе те, хăй вăйĕпе ĕçлесе **пĕтермест** пулсан, çынсен çĕрне укçалла илме ан пултарайтăр. Çапла пулас çĕр йĕркине вĕренпĕ çынсем «нацiонализацiя земли»

теççĕ. Ку сăмăх çĕр хуçи пĕтĕм халăх пулмалла тенĕ сăмаха килет. Çĕр тытса, çĕр ĕçлесе пурăнма авантарах йĕрке тăвас тесен, çĕре кашни йала, ушкăна хăйсен аллине памалла.

Анҫах, хресҫенсем хăйсене тивĕçлĕ çĕре сутассипе сутмалла марри çинҫен, . . . . . . . . . . . . . . . . . . . пуху пухăниҫҫен каласа хума пулмасӑ. Тĕрлĕ кĕпĕрнесенҫе хресҫенсем çĕре тĕрлĕ йĕркепе тытасшăн. Хăшĕ кашни çемйепе, кашни киле хăйпе уйрăм уйăрса парсан аван теççĕ. Хăшĕ йалпа тытса тăрса, йат тăрăх уйăрса парсан аван теççĕ.

Халăх суйласа йанă çынсен пухăвĕ пуçтарăнсан, ăçта мĕнле тăвас тени çинҫен канаш тăвĕç. Вара хресҫенсем çĕре йалпа йе кашни килĕ уйрăм тытса тăмалли çинҫен çак халăх суйланă çынсем канаша килнĕ пек пулĕ. Вĕсем тĕплĕрех канаш тусан çĕр йĕрки мĕнле пулмаллине каласа парĕç.

Тата вăл . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . пуху куланайпа налогсене манмалла мар. Куланайсене, налогсене, акцизсене çĕнĕрен валеçсе хумалла. Пуйансене куланайсем те, тата ытти парăмсем те ытларах тивҫĕр. Çук çынсене сахалтарах тивтĕр.

Ку йапалана тăвас тесен ҫăн малтан çĕр укçи илме пăрахмалла, унтан недоимкасене пĕтермелле. Сахăртан, шăрпăкран, кăраçинран, тимĕртен акциз сахалтарах илмелле тăвас пулаӑ.

Çак таварсене пуринҫен ытла хресҫенсем илеççĕ. Пуйан çемйе нумайрах пĕтерет пулин те, вĕсем пуринҫен нумай пĕтереймеççĕ, мĕшĕн тесен патшалăхра пуйансем нумайах мар. Патшалăхра пуринҫен ытли хресҫен халăхĕ.

Хисеплесе пăхсан, Россiяра сутакан ҫейрен, сахăртан, кăраçинран тăватă пайĕнҫен виçĕ пайне хресҫенсем, ĕçре çӳрекен çынсем илеççĕ. Çавăнпа та ку таварсен хакне йунетес пулаӑ. Сахăра Россiяра кĕрепенкине 16—20 пуса сутаççĕ. Çав сахăрах йут патшалăхсенҫе 5—6 пуса çутаççĕ. Çак йапала хысна сахăршăн акциз укçи илнĕ пирки пулаӑ. Çавăнпа та Россiяра хресҫенсемпе ĕçре çӳрекенсем ҫейе сахăр пĕрер пĕрҫĕн анҫах çыртса çыртса ĕçеççĕ. Американра ĕçри çынсем апатне те тутлă çийеççĕ.

Виççĕмĕш йапала—йут патшалăхран илсе килекен таварсенҫен куланай илме пăрахăç тăвас пулаӑ. Тимĕртен, хурçăран, ҫукунтан, çĕçĕсенҫен, пуртăсенҫĕн, çавасенҫен акциз укçи пĕрте ил-

мелле мар тусан авантарах пулĕҫĕ. Тата тырă вырмалли машинасенҫен те вăрттăн куланай илмелле мар. Вĕсем пуринҫен ытла çĕр ĕçлекене, хресҫене кирлĕ.

Хăш-хăш çынсем тимĕр-хурçăран тунă йапаласене Россіяри фабриксенҫе, савăтсенҫе тумалла, çавăнпа йут патшалăхран килекен тимĕр-хурçă тавартан куланай нумайрах илес пулаҭ, апла йут патшалăхран килекен тавар нумайах сутас çук, теççĕ. Анҫах Россіяра тунă тавар авантарах пулсан, хакĕ йӳнтерех пулса, йепле вăл тавара илес мар. Йут патшалăхра тунă тавар кунта илсе килсен хакла ӳкет. Россіяра тунă тавар килтех—илсе килнĕшĕн те укçа парас çук. «Аçтăрханта вăкăр пĕр укçа, киле çитиҫҫен пин укçана çитет, теççĕ. . . . . . . . Йут патшалăх таварĕсем темиçе пин çурхрăмран илсе килнĕ пулсан та вырăссеннинҫен темиçе хут йӳн сутăнаççĕ пулсан, паллах Россіяра тавара наҫар тăваççĕ. Ку ĕçе майа йарас тесен йут патшалăхран килекен таварсенҫен куланай илес пулмасҭ. Унпăн урăх йапала пур. Россіяра тавар тăвакан ăстасем валли, машинасем тăвакансем валли аван школасем тăвас пулаҭ. Россіяра та ăстасем ытти патшалăхри ăстасем пекех ĕçе аван пĕлсе тăҫĕр. Пĕлмесĕр нихăçан та йапала тума пулмасҭ. Россіяри фабрик-савăт хуçисем малтанах пуйса кайма хапсăнмамасăр машинасене аванлатма тăрăшсан, вырăссен таварĕ йӳнтерех те, авантарах-та пулĕ.

Унтан тата ĕçре çӳрекенсене манас пулмасҭ.

Ĕçре çӳрекен валли:

1) Кунне 8 сехет анҫах ĕçлемелле тăвас пулаҭ, вырăсерни кун пĕрре те ĕçлемелле ан пултăр.

2) Вĕсем çын йсвĕрлĕ пурăнҫăр тесен, ĕçшĕн ытларах тӳлемелле.

3) Пур çемйене те, ĕçлекен вилсе выçă йулас-тăвас пулсан, хыснаран укçа парса йе мĕнле те пулсан урăхла пулăшас пулаҭ.[1]

4) Хуласенҫе мĕскĕн, ĕçре çӳрекен çынсем валли пысăкрах тасарах хватирсем пулҫăр.

5) Хуласенҫе ĕç тупаймасăр çӳрекене çынсем, кил-çуртсăр çынсем валли укçасăрах пурăнма çуртсем пулҫăр. Вĕсена унта уксасăрах апат та пултăр.

6) Пур ĕçлекен çуртсенҫе те таса, типĕ, çутă пултăр.

Ĕçре çӳрекен çынсен аҫисем укçа тӳлемесĕрех школасене çӳреме пултарҫăр. Вĕсемшĕн пуриншĕн те хыспа тӳлетĕр. Çук çын-

сем аҫисене тумтир, апат, кӗнеке тавраш сене пурнете хысна парсе тӑтӑр.

7. Ӗҫре ҫӳрекен ҫынсене стачка тума ирӗк пултӑр. «Стачк» тесе ӗҫлекен ҫынсем хуҫине мӗн те пулсан хӑйсемшӗн тутартарас тесе пур те кӗр тӑнине калаҫҫӗ.

Унтан тата патшалӑхри законсене тикшӗрме пухӑннӑ пухӑннӑ пуху, халӑх хута вӗренесси ҫинҫен тӑрӑшмалла. Вӑл (пуху) пур ҫӗрте те школа пултӑр тесе, школасем валли укҫа нумайрах пайне хумалла. Вӑл школасенҫе халхинҫен нумайрах вӗрентме тӑрӑшмалла. Халӑх валли библіотекасем (вулама кӗнеке нумай пуҫтараҫҫӗ. Ҫав кӗнекесене «библіотекасем» теҫҫӗ), вуламалли вырӑнсем, халӑх вӗренмелли школасем, университетсем тумалла.

Ҫак каланӑ йапаласене, ҫӗнӗ ирӗксене ҫӑнах та ҫапла тӑвас тесен, патшалӑхра тӗп законсене тикшӗрме суйланӑ ҫынсене малтан каланӑ пек пур халӑх та пурте пӗр тан пулса, суйлас пулаҫ.

Суйланӑ ҫухне ҫав йапаласемшӗн тӑрӑшас тийекен ҫынна суйлас тесен, халӑха пуҫтарӑнса канаш тума, ушкӑнсем (союзсем) тума ирӗк парас пултӗ. Сӑмах ирӗкӗ, кӗнеке-хаҫет синҫе ҫырма ирӗк пултӑр.

Казань. Центральная типографія. 1906.